## Милици хроникинчен

### Ватлăх кунĕсем çитсессĕн, шыв паракан та кирлĕ пулĕ

Ача-пăча чи малтан çемьери лару-тăрупа паллашать. Лайăх е япăх пулăма уйăрма вĕренет. Çакăнта тĕслĕх выранне ашшĕ-амăшĕ пулса тăрать. Çапла вара пурнăçăн аслă çулĕ çине тухма хатĕрленет. Енчен те эрех-сăра ĕçекен хăтланăвĕсене курсан, мĕн тĕслĕхе илмелли юлатьха унăн?

Январĕн 19-мĕшĕнче Москакасси ялĕнчи Молодежная урамри пĕр çемьере шăвшав çĕкленет. Ку ĕç 17 сехетре пулса иртет. Эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ арçын, 1958 çулта çуралнăскер, тăван хĕрне пуртăпа вĕлерессипе хăратать. Çак пӳтсĕр-намăссăр (çын тесе калама çăвар уçăлмасть) пирки РФ УК 119 статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. Яланхи пекех, харкашу тĕп сăлтавĕ эрех пулнине куратпăр. Çапах та алăсене симĕс çĕленлĕ вилĕм черкки патнех тăсатпăр, вĕренĕн те вĕçĕ пур тенине асра тытмастпăр.

### «Хуçалăхăн пулсан, вăрлама юрать»,–

тенине тĕпе хунă-ши Мичурин яч. хис. хуçалăх кантурне çаратакан? Алăри пӳрнесене хуçлатса пыратăн та çакăнти ĕç пӳлĕмĕсем витĕр хаклă япаласене çилтăвăл вĕçтерсе тухса кайнă пулĕ тетĕн. Пĕр пӳтсĕр çăрасене çĕмĕрсе тĕп инженерăн пӳлĕмĕнчен сĕт сумалли аппаратăн 1 комплектне, электроцехран 6 ст - 65 маркăллă 2 аккумулятор батарейине, подстанцинче усă курмалли 12 трансформатора, 40 метр тăршшĕ аллюмини электропралук чĕркине, çавăн пекех Т-150 трактор радиаторне вăрласа тухнă. Пĕтĕмĕшле хуçалăха 23600 тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Ах, ку пурлăха аслашшĕн хыçлă хура çунипех тиеме килнĕ пуль! Кукăр алăллăскер, хăравçă мулкач евĕр, кăмака хыçĕнчен те тухаймасть пулĕ-ха. Е кăсăруклисемпе вăрăм калаçу ирттерме хатĕрленетши?

### Вĕрен те вĕççĕр мар

«Ах, хуняма, хуняма – иккĕмĕш анне», - тесе шăрантарать пĕр юрăç. Ку йĕркесем килĕштерсе пурăннăранах шăрçаланнă пулĕ те. Анчах ку кĕвĕне пурте кăмăлламаççĕ иккен.

Январĕн 18-мĕшĕнче 1948 çулта çуралнă пӳтсĕр, ытла та хăвăрт хĕрсе кайнăскер, хăйĕн хуçалăхĕнче асар-писер çилтăман кăларать. Çак ĕç Кăмăркасси ялĕнче пулса иртет. Арçын çĕçĕпе хуньамăшĕн пилĕкне суранлатать, вĕлерессипе хăратать. Ватăскерне больницăна илсе çитерме тивет. Вĕсене тискерлĕх мар, тимлĕх кирлĕ те...

### Кĕсье телефонĕ «ураланнă»

Муркашра утакан кăсăруклă сотрудниксене асăрхасан «Милици ĕçченĕсем кăмпа пекех шăтса тулчĕç, усси пур-ши вĕсенчен?» - тенине пĕрре çеç мар илтме тӳр килнĕ. Шутласа пăхар-ха, çемьере харкашу тухсан, вăл е ку япала «уралансан» тӳрех «02» телефонпа шăнкăравлатпăр, пулăшу ыйтатпăр вĕт-ха.

Паянхи цивилизаци тапхăрĕнче кĕсье телефонĕсĕр çын çук та пулĕ. Çак хисеп йышланса пынипех вăрласси те питĕ нумайланчĕ.

Январĕн 22-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр райповĕн çăкăр заводĕнчи пĕр цехран «SAMSUNG-X460» кĕсье телефонĕ «çунатланнă». Этикеткăсем упрамалли çӳлĕк çинчен 8-908-840-02-05 номерлĕскер ăçталла çул тытнă-ши? Халĕ кăсăруклисем çакăн çулне питĕ тĕплĕ тĕрĕслеççĕ. Намăса çухатнă кукăр алăллисене вĕсем часах шыраса тупаканччĕ-ха.

### Сума сăвар е?..

Çын çине алă çĕклеме юрамасть, аллу чĕтрекен пулать, тенине тăтăшах илтме пулать аслисенчен. Анчах та çак каларăша хăлхи çумĕпе çеç ирттерсе янă пулас Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкассинчи 1985 çулта çуралнă каччă. Январĕн 13-мĕшĕнче 17 сехетре çак ялти тепĕр çын патне каять. Шел, ырă шухăш-кăмăлне килнех манса хăварать. Çапла вара иккĕмĕш ушкăнри инвалида тухнă кил хуçи арçыннине тапса-çапса хĕнет. Сусăрăннскерне тепĕр темиçе кун иртсен больницăна леçме тивет. Ку ĕç пирки РФ УК 116 ст. уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Эй, яш каччă, сан тантăшусем Тăван çĕршыва хӳтĕлесси çинчен шутлаççĕ, эсĕ вара?

### Эрех? Çапла, каллех эрех!

Пасарти хаксен шайĕ хуçаран тата тавар пахалăхĕнчен килет. Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнчи эрех сутуçисем вара хăйсен таварĕсене пысăк пахалăхлисен шутне кĕртнĕ пулас. Е ку тăрăхсем укçаллă çынсем? Кунти усламçăсем 0,5 литр вилĕм шĕвекĕшĕн 50 тенкĕ тупăш илеççĕ. Çак сутуçăсем тӳремменĕх пускил çемйине хавшатакансем, кĕсйине пушатакансем пулаççĕ. Айтăр-ха, шутласа пăхар. Енчен те çемьене 50 тенкĕлĕх сахăр илсе кĕртсен е тата арăма валли тутăр туянсан епле пысăк савăнăç пулнă пулĕччĕ. Çак усламçăсенчен пĕри 1955 çулта çуралнă арçын пулнă. Тепри 1938 çулта çуралнă кинемей. Ват çын тăват çын тенине ăс-тăн, канаш паракан тесе ăнланмалла пек туйăнать. Эсĕ, вара, кинемей, тăварлă куççуль, харкашу парнелекен пулмастăн-и-ха? Е эсĕ пачах та курман çав пулăма?

Хальлĕхе ячĕсене палăртмастпăр. Çитес номерсенче тĕплĕнрех паллаштарăпăр вĕсемпе.

**Районти шалти ĕçсен материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Указа ăнлантарса пани

Ачаллă граждансене социаллă пулăшу парас тата Чăваш Республикин территорийĕнче федераци саккунĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Чăваш Республикин Президенчĕ Указа алă пусрĕ. Унпа килĕшӳллĕн опекунсен, попечительсен тата ачана усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕн çемйисенче воспитани илекен ачасен пособине тата усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕн ĕç укçине ӳстермеллине палăртнă.

Ачасем миçе çултине кура пособисен виçи уйăхра 4000, 4160 тата 4570 тенкĕпе танлашать, ачана усрава илнĕ ашшĕне е амăшне ачана воспитани панăшăн тӳлекен ĕç укçи – 2500 тата 3600 тенке çити ӳснĕ, ку Раççей Федерацийĕнче палăртнă шайран пысăкрах. Хушма тăкаксене саплаштармалли укçа-тенке республика хăй тӳлет.

Халĕ йышăнакан мерăсем опекунсен, попечительсен тата ачана усрава илнĕ çемьесенче воспитани илекен ачасен пурнăç условийĕсене лайăхлатма май парĕç.

**ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Н. СУСЛОНОВА.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Уважаемые абоненты местной телефонной сети филиала в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком».**

**Напоминаем ВАМ, что с 01 февраля 2007 г. вводятся в действие новые тарифы на услуги местной телефонной связи.**

**Обращаем Ваше внимание, что ввиду отсутствия технической возможности повременного учета на сети филиала для абонентов филиала в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком» повременный учет местных телефонных соединений и связанные с ними тарифные планы с 01.02.07 г. не вводятся.**

**Для всех категорий абонентов местной телефонной сети в 2007 г. сохраняется абонентская система оплаты, при которой продолжительность местных телефонных соединений не ограничена.**

**Более подробную информацию вы можете получить во всех отделениях электросвязи и сервис-центрах филиала в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком», на сайте www.chr.vt.ru, а также по телефону горячей линии (круглосуточно):**

**8-800-707-69-09 – для всех жителей Чувашии (звонок бесплатный), 25-69-09 для жителей г. Чебоксары и Новочебоксарск (звонок бесплатный).**

**Тарифы, вводимые с 01.02.2007 г. на услуги местной телефонной связи, предоставляемые филиалом в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком».**

**Тариф на предоставление доступа к сети местной телефонной связи независимо от типа абонентской линии (проводная линия или радиолиния) сети фиксированной телефонной связи снижен и составляет:**

**для абонентов-граждан, живущих в городском поселении, 5000 рублей;**

**для абонентов-граждан, живущих в сельском поселении, 3000 рублей.**

**Абонентская плата:**

**- для абонентов-граждан, живущих в сельском поселении, останется без изменений – 180 рублей в месяц;**

**- для абонентов-граждан, живущих в городском поселении – 200 рублей в месяц.**

**Халăхран лайăх хакпа ĕне, вăкăр, тына ашпа тата чĕрĕ виçепе пуçтаратпăр.**
**Тел.: 60-7-10, 8-927-848-17-06. 1-4.**

**Куплю пух-перо (гусиное, утиное новое и старое).**
**Тел.: 36-2-37, 8-903-379-01-23. 2-2.**

**Требуются подсобные рабочие в Нижегородскую область. Оплата 8-9 тысяч руб. в месяц. Жилье, питание.**
**Тел.: 8-927-848-52-25, 8-906-133-67-72. 2-2.**

**ООО «Декор» срочно требуются рабочие по сборке корпусной мебели и отделке внутренних помещений. Оплата сдельная, в срок.**
**Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Кр. площадь, д. 3.**
**Телефон: 8-905-343-08-10. 3-3.**

**Сĕт-çу заводне хирĕç вырнаçнă йышăну пунктĕнче ĕне-выльăх тата сурăх-така тирĕсене хаклă хакпа йышăнатпăр. Сурăх-така туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57. 3-3.**

**ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:**



**- упитанных быков, телок, свиней, коров в живом виде;**
**- свинину.**



**Телефон для справок: 60-662, 8-9603051597 звонить в любое время суток. Герман. 1-3.**


Администрация Моргаушского района и районное Собрание депутатов выражают соболезнование Калинину В.А., директору ОАО «Моргаушский молочный завод», депутату районного Собрания депутатов, по поводу кончины матери

**КАЛИНИНОЙ Нины Емельяновны.**

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕ ку хуçалăхра нумай çул хушши тракторист пулса ĕçлекен Б.А. Пичушкинăн юратнă хĕрĕ

**Эльвира Борисовна ПИЧУШКИНА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ вĕрентӳ пайĕн тĕп экономисчĕн Т.Л. Идакован

**МĂШĂРĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

## Спорт

### Масс-стартра – пиллĕкмĕш



2007 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче Словенири Поклюке хулинче биатлон енĕпе Тĕнче кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусен улттăмĕш тапхăрĕн юлашки 6-мĕш кунĕ иртнĕ. Масс-старта хĕрсем хушшинче Раççей спортсменĕсем тăваттăн хутшăннă. Вĕсенчен пĕри – пирĕн ентеш Татьяна Моисеева. Спринт тата йĕрлесе пырассин ăмăртăвĕсенче 2-мĕш вырăнсене йышăннăскер, пăшалтан пенĕ чух пĕр хут лектерейменнине пула Т. Моисеева итог протоколĕнче 5-мĕш йĕркене лекнĕ. Унăн хĕр-тусĕсем Ольга Анисимова – 13-мĕш, Ирина Малыгина – 21-мĕш, Екатерина Юрьева – 24-мĕш.

**Хамăр инф.**

## Йыхрав

### Пуху пулать

Çулталăк вĕçленчĕ, тет календарь, апла пулсан иртнĕ çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетме те вăхăт. Çакăн пек ĕçе туса ирттерме палăртать районти куç курманнисен пĕрлешĕвĕ. Организаци обществăлла пулнăран, ертсе пыракан тытăма пĕрлешӳри çынсем суйлаççĕ.

Иртнĕ çул сахал мар улшăну пулса иртрĕ организацинче çеç мар, унăн тулашĕнче те. Çакă куç япăх куракансене те тӳремменĕх пырса тивет. Апла пулсан пухăнса калаçмалли, сӳтсе явмалли чылай. Хумхантаракан ыйтусен хуравĕсене те кунта татса пама май пур.

Организаци икĕ района пĕрлештернĕрен пуху Муркашра январĕн 29-мĕшĕнче, Элĕкре январĕн 30-мĕшĕнче пулать. Çавăнпа та куç япăх куракансене активлăрах пулма, асăннă кун вăхăтра çитме ыйтасшăн.

Пуху район администрацийĕнче 1-мĕш хутри залра 10 сехетре пуçланать.

**А. МИХАЙЛОВА, Муркаш районĕнчи куç курманнисен вырăнти организацийĕн ертӳçи.**

## 01 пĕтĕмлетет, асăрхаттарать

### Тирпейлĕхпе лăпкăлăх тачă çыхăнура

Вăрăран юлать те вутран нимĕн те юлмасть. Ĕмĕртен пыракан çак чăнлăх пирĕн пурнăçра самантлăха та хăй пĕлтерĕшне çухатмасть. Ăна манăçа кăларса пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине аяккалла сирекенсен вăхăт иртсен час-часах чавса çыртма тăрăшма пикенмелле пулса тухать. Анчах... хамăр ларакан турата хамăр касса тăрсан...

Иртнĕ çул район территорийĕнче пулнă 49 пушартан 41-шĕ уйрăм çынсен пурăнмалли çурт-йĕр таврашĕнче тухрĕ, вĕсенче 12 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ, пĕр çын йывăр пиççе кайрĕ. Мĕн калать-ха çак ӳкерчĕк? Пушар хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе пирĕн обществăра тимлĕх сахалли пирки. Акă, иртнĕ çул "хĕрлĕ автан" хуçаланнă тĕслĕхсен сăлтавĕсене пăхсан-тишкерсен, 11-шĕнче çынсем усă çулăмпа асăрханусăр пулни курăнать. Тепĕр 14 инкек никĕсĕнче электрооборудование техника тĕлĕшĕнчен эксплуатацилес правилăсене сĕмсĕррĕн пăсни, 7 тĕслĕхре йăлари электроприборсене эксплуатациленĕ чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни, 4 хутчен кăмакасемпе мăрьесене юсавсăр тытни миллионшар тенкĕлĕх пурлăха кĕл туса çилпе вĕçтересси патне илсе çитерчĕ. Килĕшетпĕр, хурлăхлă ӳкерчĕк, анчах пирĕн паянхи пурнăç чăнлăхĕ çапла. Мĕнле пăрăнмалла-ха çак хăрушлăхран? Ял тăрăхĕсен кунĕсене ирттерме вырăнсене çитсен унăн хуравĕ ал тупанĕ çинчи пекех ума тухса тăрать. Мĕнле çитменлĕхсем-ха вĕсем? Çитменлĕхсем пирки вара Раççей Федерацийĕнче 2003 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче вăя кĕнĕ пушар хăрушсăрлăх правилисенче уççăнах каланă. Вĕсене РФ Юстици министерствинче 4838 номерпе 2003 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче регистрациленĕ. Апла пулсан ку вăл пирĕншĕн пурсăмăршăн та куллен пурнăçламалли саккун.

Саккун саккунпа та, анчах вырăнсене çитсен ял çынни час-часах патшалăх пушар надзор инспекторне е комиссие хăйĕн хуçалăхне пушар хăрушсăрлăх правилисенче ыйтнă пек тĕрĕслеме çул паманни тĕл пулать. Кунпа пĕрлех чылай çĕрте ял территорийĕсем, килти хушма хуçалăх тата пурăнмалли çурт çумĕнчи территорисем хăвăрт çунакан ăпăр-тапăрпа тулса ларни, тăкăрлăксемпе шыв çăл куçĕсем патне пымалли çулсем пушă марри куç умне тухать. Ялсенче пулсан тĕрлĕ ăпăр-тапăра çуртйĕртен пушар хăрушсăрлăх правили ыйтнă пек 50 метртан инçетерех çунтарассине пăхăнманнине тата тивертнĕ кăвайта никам пăхмасăр пăрахса хăварнине курма пулать. Ял тăрăхĕсен кунĕсене хутшăннă май хăш-пĕр килсене çитсе курсан хăвăрт хыпса илекен шĕвексемлĕ канистрсем усă вырăнсенчех упранни, ял çыннисем хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланиччен кăмакасене тĕрĕслеменни тата юсаманни, мăрьесене виçĕ уйăхра пĕрре хăрăмран тасатманни, çунакан кăмакана никам пăхмасăр пăрахса хăварни, вутă-шанкăна кăмака çывăхнех купалани куç умне пулаççĕ. Пурăнмалли пӳрт-çуртпа хушма хуралтăсенче электричество çутипе усă курнă çĕрте те пушар хăрушсăрлăх правилисене пăсни кашни утăмрах тĕл пулни питех те шиклентерет.

Электрохуçалăх тенĕрен, килти хуçалăхсенче çынсем нумай чух юсавсăр электророзеткăсемпе, рубильниксемпе, сарайсемпе витесенче плафонсемсĕр электросветильниксемпе, кивелнĕ электрокабельсемпе усă курни куç умне пулать. Пурăнмалли пӳртсенче час-часах юсавсăр электроутюгсемпе, электрокăмакасемпе, электроплитасемпе, электричествăпа ăшăтмалли хăйсем тĕллĕн ăсталанă приборсемпе усă курни тĕл пулать. Правилăсене пăсса тĕрлĕ жилăллă электропралуксене сыпăнтарни тата сыпăнтарнă вырăнсене изоляцилеменни, вĕсене хӳтĕлев курупкисене вырнаçтарманни, çуртсем хушшинчи электролинисене троссемсĕрех карăнтарни, электропроводасен сопротивленине тĕрĕсленин акчĕсем çукки ялсенчи пушар хăрушсăрлăх ыйтăвне çивĕчлетет кăна.

Маларах каланисем Мускавран е Шупашкартан килсе туса памалли ĕçсем мар. Вĕсене вырăнсенче пурнăçа кĕртме ял тăрăхĕсен çанă тавăрсарах ĕçлемелле. Саккун та çаплах ыйтать.

**О. ЕФИМОВА, районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн профилактика инструкторĕ.**


ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета "ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Заместитель гл. редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3472.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 26.01.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.